# Çĕнтерӳ çулĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru

Вăрнар район хаçачĕ

2011 çул пуш/март/ уйăхĕн 30-мĕшĕ • юн кун • 35/10352/ № • Хакĕ ирĕклĕ


# Чăваш авторĕсене вулатпăр



**Чăваш наци библиотеки 2009 çулта пичетлесе кăларнă кĕнекесенчен чи лайăххине палăртассипе конкурс ирттерни çинчен пĕлтернĕччĕ. «Литературăллă Чăваш ен: çулталăкри чи лайăх кĕнеке – 2009» акцие пĕтĕмлетеççĕ. Ял библиотекисем тăратнă даннăйсем тăрăх, конкурсра Геннадий Максимовăн «Çĕрĕллĕ хура кушак» кĕнеки малта пынă.**

## ПУЛТАРУЛĂХ

Чăваш халăхĕн пултаруллă та çивĕч чĕлхеллĕ çыравçисен ретĕнче тивĕçлипе çирĕпленнĕ автор ĕнер районти библиотекăсенче тимлекенсемпе тĕл пулчĕ. Калаçу, паллах, асăннă конкурсра малта пыракан унăн кĕнеки тавра пычĕ.

Вилĕмсĕр тема – юрату – пысăкрах вырăн йышăнать пулин те, автор кĕнекере çав тери çивĕч ыйтусене (чăвашлăх, экологи, сывлăх сыхлавĕ) те хĕрӳллĕн çекленĕ. Вĕсем – чăн пурнăç ӳкерчĕкĕсем, пуш сăмахпа вĕрсе тултарнисем мар.

Кĕнекене «Çĕрĕллĕ хура кушак», «Вăхăта парăнман юрату», «Кулак ачи» повеçсем, «Амăшĕн пехилĕ», «Ирхи шăнкăрав» калавсем кĕнĕ. Сăнарсем йышĕнче Вăрнар тăрăхĕнче пурăнакансене те паллама пулать. Геннадий Максимов хăй вăхăтĕнче Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕнче вĕреннĕ, журналист профессийĕ те ăна пирĕн района пит нумай илсе çитернĕ. Кунти тĕл пулусем, калаçусем, çыннисем унăн статйисемпе очеркĕсене кăна мар, литература произведенийĕсене те ĕмĕрлĕх кĕрсе юлнă. «Хаçатри публикацисем вăхăт иртнĕçемĕн манăçа тухаççĕ, кĕнеке вара ăруран ăрăва куçать. Çак шухăш хистерĕ те мана кĕнеке кăларма», – терĕ вăл халăха вулавпа туслаштаракансене хăй литература çулĕ çине мĕнле тăнипе паллаштарнă май. Чăвашрадио, чăваш телевидени компанийĕн корреспонденчĕ, «Хресчен сасси» хаçат редакторĕн заместителĕ, халĕ вара пĕр вăхăтрах «Хыпар» хаçатăн шеф-редакторĕ тата чăвашсен паллă та пултаруллă çыравçи.

«Çĕрĕллĕ хура кушак», висĕм çул пичетленсе тухнăскер, унăн пĕрремĕш хайлавĕ – «Сталин грамоти» – пекех вулакан чунне тыткăнларĕ. Сăмах май, «Сталин грамоти» темиçе çул каялла халăх юратса вулакан 140 кĕнеке хушшинче 5-мĕш вырăн йышăннăччĕ.

– Паян ытларах мĕн вулаççĕ?– тĕл пулу умĕн кăна районти тĕп библиотекăн абонементĕнче кăсăклантăм эпĕ. Юрату романĕсем, детективсемпе фантазисем хушшинче чăваш кĕнекисене те асăнни чуна хăпартрĕ. Авторсенчен Геннадий Максимов ячĕ чи малтан илтĕнчĕ. Эппин, вăл «Литературăллă Чăваш ен: çулталăкри чи лайăх кĕнеке–2009» конкурсра та палăрнинчен тĕлĕнмелли çук...

**С.ЧИКМЯКОВА.**

## ÇУР АКИ – 2011

### Пулас тухăçшăн тăрăшса

Районĕпе илсен çур аки ирттерме тĕш тырăсемпе пăрçа йышши культурăсем 25243 центнер е 86 процент хывнă. «Янгорчино», «Знамя», «Мураты», «Хорнзор», «Победа», Карл Маркс ячĕллĕ кооперативсенче, М.Тарасовпа А.Игнатьев фермерсен хуçалăхĕсенче вăрлăх 100 процентĕпех кондициллĕ.

Паха вăрлăх пысăк тухăç парать. «Санары», «Победа», «Луч», «Янгорчино», «Юнтапа» предприятисем пысăк репродукциллĕ тĕш тырăсемпе пăрçа йышши культурăсем туяннă.

Тыр-пула ака стандартне тивĕçтерессипе районта звеносем ĕçлеççĕ. Аш-какай комбиначĕн хушма хуçалăхĕнче – иккĕ, «Агрохмель», «Броневик», «Гвардеец», «Луч» ял хуçалăх организацийĕсенче – пĕрер.

### Мехпарксем пуянланнă

Техника – ял хуçалăх организацийĕн «чĕри». Çав тĕллевпе аграрисем хăйсен вăйĕпе тата кредит ресурсĕсемпе усă курса мехпарксене пуянлатма тăрăшаççĕ. Акă Вăрнарти аш-какай комбиначĕ гусеницăллă «Джон Дир – 8520» трактор туяннă. Çавăн пекех «Мураты», «Санары», Карл Маркс ячĕллĕ хуçалăхсем мехпарксене пуянлатнă.

**Хамăр инф.**

# Пулĕ-ши çав саккун?

**«АиФ» хаçат «Урăлас пулсан мĕнле саккун кирлĕ» рубрикăпа «Наци хӳтлĕхĕшĕн» акци ирттерет. Чăтаймарăм – вуласа тухрăм. Халăх ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхни çинчен, чĕлĕм туртнипе чирлекенсем пирки тата наркомани çамрăк ăру хушшинче сарăлса пыни çинчен икĕ çын икĕ тĕрлĕ шутлать. Пĕрин те вырăнлă, халăха пулăшасла сĕнӳ çук.**

## ШУХĂШ ШĂНКĂРАВĔ

Эпĕ вĕреннипе пĕрле медицинăра 40 çул ытла ĕçленĕ. Сталин ывăлне Василие, урине тытнăскерне, тутарсен республикăри больницинче сипленĕ çĕре хутшăнса курнă. Ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхсе çын ятне çухатнисене сахал мар тĕл пулнă. Наркоманипе те кĕрешме тивнĕ.

Манăн ăру çĕр-шывшăн чи йывăр вăхăта тӳссе ирттерчĕ, апла пулин те эрех-сăрапа иртĕхсе курман. Сахал мар кантăр акса сӳс тунă. Кантăр вăррине ывăçĕ-ывăçĕпе çинĕ. Наркоман пулса кайман. Кăштах аташнă пулсан та чĕлĕм туртма хăвăртах пăрахнă. Спирт алăра чухне те пуçа çухатман.

Ялти Мăн урампа утнă май кил урлă кил пушă ларни кăçал юр нумай пулнипе катаранах курăнать: кил умне кĕрекен утма çул вырăнне юр купи капланса выртать, кушак йĕрри те çук. Пушă килсен шучĕ çитмĕл урлă каçрĕ. Пур уйра та тырă-пулă акăнмасть. Çемье хисепĕ те путланчĕ. Ĕлĕкрех кашни çемьере тенĕ пекех тăватă-пилĕк ача ӳснĕ.

Мусульман çĕр-шывĕсем вут-çулăм кăларсах пурнăç тĕллевне шырама тытăнчĕç, мĕншĕн тесен мусульмансем пурте пĕрпĕринпе тачă çыхăннă, вĕсем хăйсенчен мăшкăлама памаççĕ.

Кĕсьере укçа пулсан чысна та, чинне те

➡ 2 стр.

## НАРКОТĔРĔСЛЕВ

### Граждансем пулăшнипе

Мартăн 10–18-мĕшĕсенче Пĕтĕм Раççейри «Ăçта вилĕм сутнине пĕлтер» акцин пĕрремĕш тапхăрĕ иртнĕ. Ăна наркомани ыйтăвĕ пирки пĕтĕм обществăна шутлаттарас, наркотике иленсе инкеке кĕрсе ӳкнĕ çынсене пулăшас тĕллевпе йĕркеленĕ. Республикăри Наркотĕрĕслев управленийĕнче тата районсем хушшинчи пайĕсенче талăкĕпех шанчăк телефонĕсем ĕçленĕ.

Акци вăхăтĕнче ку телефонсем çине 17 шăнкăрав килнĕ. Пĕр эрнере 24 преступлени тупса палăртнă, 22 уголовлă ĕç пуçарнă, 2 притона хупнă, наркотиклă япаласене 300 грамм енне туртса илнĕ (çав шутра 40 грамĕ – туртмалли хутăшсем).

**Е.РОМАНОВА.**

## ÇАНТАЛĂК

**Кĕçнерни кун**
31.03
0
-6

| Эрне кун | Шăмат кун |
|---|---|
| 1.04 | 2.04 |
| -1 | -1 |
| -6 | +1 |

*«Метеоновости» информаци агентствин информацийĕ тăрăх.*

## «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçата 2011 çулăн иккĕмĕш çур çулĕ валли çырăнтармалли тапхăр пырать

2011 çулхи июль–декабрь уйăхĕсенче «Çĕнтерӳ çулне» почта урлă илсе тăма хальхи хакпах – 187 тенкĕ те 80 пуспа – çырăнма пулать. Хаçата редакцие килсе илмелле те çырăнтараççĕ, хакĕ – 110 тенкĕ. «Çĕнтерӳ çулне» çырăннисем Вăрнар чиркĕвĕн прихучĕ кăларса тăракан «Георгиевский листок» хаçата малашне те тӳлевсĕр илсе тăрĕç.

**«Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатсăр ан юлăр. Юратнă хаçата çырăнăр, вулăр!**

